25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
АВГУСТ
30
ЫРСАРНИКУН
203 (6138) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Кашни рабочи стахановецсен ретне тӑтӑр

Ҫичӗ ҫул каялла, 1935 ҫулти августӑн 30-мӗшӗнче, Донбасри Сталин ячӗпе тӑракан шахта забойщикӗ Алексей Стаханов тӗнчере никамран нумай кӑмрӑк кӑларчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫӗршывра ун пек тухӑҫлӑ ӗҫлекенсен движенийӗ—стахановла движени пуҫланса кайрӗ. Халӗ стахановецсем миллионшарӑн шутланаҫҫӗ. Фабрикӑсемпе заводсенче, транспортра, колхозсемпе совхозсенче — пур ҫӗрте те вӗсен хӗрӳ ӗҫне курма пулать.

Стахановецсен Пӗтӗм Союзри пӗрремӗш канашлӑвӗнче В. М. Молотов юлташ: «фашизм тискер ӗҫсен тата тӗнчери хура вӑйсен символӗ пулса тӑчӗ», тесе каларӗ. Ҫак хура вӑйсем пирӗн ҫӗршыв ҫине вӑрӑ-хурахла тапӑнса кӗнӗрен вара ҫулталӑк ытла иртрӗ ӗнтӗ. Анчах Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе Хӗрлӗ Флот морякӗсем вӗсене хирӗҫ вӑйлӑн тӑраҫҫӗ, кашни метр ҫӗр лаптӑкне, кашни ҫырана паттӑррӑн сыхлаҫҫӗ.

Чаплӑ воинсене ҫак кӗрешӳре ҫӗршыври мӗнпур ӗҫҫыннисем пулӑшса тӑраҫҫӗ, ҫӗнтерӗве фронтра ҫеҫ мар, тылра та туптаҫҫӗ. Фронтри боецсем вилӗмрен шикленмесӗр ҫапӑҫаҫҫӗ пулсан, тылри патриотсем вӑя шеллемесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Ӗҫри чи ырӑ примера, ӑсталӑхпа тухӑҫлӑха стахановецсем кӑтартаҫҫӗ.

Стахановла движени — пирӗн вӑхӑтри чаплӑ патриотизмла движени. Ҫӗршывра Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту пынӑ май, вӑл татах та сарӑлса вӑйланчӗ. Стахановецсен ретне пирӗн промышленноҫпа транспортри ҫӗнӗрен ҫӗнӗ рабочисемпе работницӑсем хутшӑнаҫҫӗ. Пӗр июль уйӑхӗнче кӑна вӗсен йышӗ Ҫӗмӗрлери комбинатра 10 процента яхӑн, Канатов юлташ ертсе пыракан заводра 35 процент чухлӗ ӳснӗ. Сӗнтӗрвӑрринчи судоверфьра стахановецсем 66 ҫын шутланаҫҫӗ. Республикӑри ытти предприятисенче те вӗсем сахал мар.

Стахановец—ӗҫ техникине витӗр вӗренсе ҫитнӗ работник, вӑл производствӑн новаторӗ. Оборудованисемпе туллин усӑ курса, вӑл техникӑран мӗн илме май пуррине пӗтӗмпех илме тӑрӑшать, тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларсасӑр, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырать, паян ӗнерхинчен, ыран паянхинчен ытларах продукци парать. Канашри вагонсем юсакан заводри стахановецсем: фрезеровщик Осипов, строгальщик Гимранов, термист Моряков тата Смирнов юлташсем иртнӗ ҫулта 2—3-шер норма тултаратчӗҫ. Фронта вӑйлӑрах пулӑшассишӗн ҫунса, вӗсем кӑҫал пӗрмаях 5—6 норма, кӑшпӗр кунсенче 10 шар норма тултаракан пулчӗҫ. Нормӑна 1000 процент таран тултарса ӗҫленӗрен вӗсене тысячниксем теҫҫӗ.

Стахановла движенипе социализмлӑ ӑмӑрту республикӑра малтанхи тысячниксене ҫуратрӗ. Чыс та мухтав ӗҫри паттӑрсене—нормӑран 10 хут тухӑҫлӑрах ӗҫлекенсене!

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура двухсотниксемпе трехсотниксен—вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи стахановецсен речӗ хӑвӑрт ӳссе пырать. Вӗсем стахановецсен йышлӑ пайӗ шутланаҫҫӗ. Ҫӳлте асӑннӑ заводӑн инструментальнӑй цехӗнчи рабочисем пурте — двухсотниксемпе трехсотниксем. Заводӑн ытти цехӗсенче те вӗсен йышӗ сахал мар. Вагонсем юсакан цехри Чесов, Чернухин, Капелюха бригадисем нормӑна 200—300 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Кун пек тӗслӗхсем нумай.

Партипе профсоюз организацисен, фабрикӑпа завод руководителӗсен задачи—двухсотниксемпе трехсотниксен йышне куллен ӳстерсе пырасси, кашни стахановецпа стахановкӑна вӗсен ретне тӑратасси пулать. Анчах унпа пӗрлех рабочисен тӗп масси ҫинчен—вӑтам рабочисем ҫинчен манма юрамасть, мӗншӗн тесен, **«производствӑри ӑнӑҫӑва вӑтам ҫынсем, рядовой ҫынсем татса параҫҫӗ»** (М. И. Калинин). Чылай предприятисенче пирӗн халӗ вӑтам рабочисен йышӗ стахановецсен йышӗнчен пысӑкрах. Вӗсем мӗнле ӗҫленинчен предприятин пӗтӗмӗшле ӑнӑҫлӑхӗ килет. Апла пулсан, пирӗн стахановецсемпе ӗҫленипе пӗрлех, вӑтам рабочисемпе те ӗҫлемелле: предприятири кашни станок нормӑна тултартӑр, ирттерсе тултартӑр.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли лайӑх май—рабочи пӗр вӑхӑтрах темиҫе станок ҫинче ӗҫлени, ик-виҫӗ профессие пӗлни. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче профессисене улӑштарса ӗҫлесси стахановла движенин форми пулса тӑчӗ. Рабочисен пӗр пайӗ фронта кайнӑ пирки тылри патриотсен 2—3 ҫыншӑн ӗҫлеме тивет. Н-ски заводри Иванова, Пичкаскова, Бондарь тата ытти нумай стахановкӑсем пӗр вӑхӑтрах темиҫе ҫынӑн ӗҫне тӑваҫҫӗ. Ҫакӑн пек ӗҫлеме, пӗччен вӑйпах нумайрах та лайӑхрах продукци пама предприятисенчи кашни рабочипе работницӑна вӗрентмелле.

Стахановла движенин тепӗр форми вӑл—Лунин пек ӗҫлени. Машинист Лунин хӑйӗн паровозне ҫул ҫӳренӗ вӑхӑтрах, хӑйӗн вӑйӗпе тата государство укҫине тӑкакламасӑр юсать. Ҫапла туни ремонтнӑй рабочисен ӗҫне ҫӑмӑллатма, машинӑпа ахаль тӑрасран хӑтарма тата унӑн ӗҫлес вӑхӑтне вӑрӑмлатма пулӑшать, унпа пӗрлех государствӑна пысӑк усӑ кӳрет. Ӗҫӗн Лунинла паха мелӗсемпе машинистсем ҫеҫ мар, чугунҫул ҫинчи ытти работниксем те анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Вӑрнар станцинчи паллӑ стрелочник Михаил Попов стрелка хуҫалӑхне вырӑнти материалсемпе тата тӳлевсӗр юсаса тӑрать. Ҫавӑн пек пархатарлӑ ӗҫсене Смирновӑпа Пыринова (Ҫӗмӗрле станцийӗ), Герасимовпа Клюковкин (Йӗпреҫ станцийӗ) юлташсем те тӑваҫҫӗ.

Лунинла ӗҫ меточӗсене транспортра ҫеҫ мар, промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗнче те анлӑн сармалла. Заводри станочник, хирти тракторист, ҫул ҫинчи шофер—пурте, кам машина таврашӗнче ӗҫлет, пӗчӗк ҫӗмрӗксене ҫийӗнчех юсама пӗлмелле. Хуҫалӑх руководителӗсен тивӗҫӗ—рабочисене юсав ӗҫне вӗрентесси тата ҫавна тума кирлӗ хатӗрсемпе япаласене тупса парасси пулать.

Отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче пирӗн фабрикӑсемпе заводсене ҫамрӑк рабочисем чылай хутшӑнчӗҫ. Вӗсене хӑйсен ӗҫне кӗске вӑхӑтра тата лайӑх вӗренсе ҫитме пулӑшас пулать. Мастерсемпе ватӑ рабочисен ҫамрӑк кадрсене шефа илсе, вӗсене хӑйсен ӗҫ мелӗсемпе паллаштармалла, тӑтӑшах производствӑллӑ канашлусем ирттермелле, стахановецсен ӗҫ опытне ытти рабочисене вӗрентмелле. Стахановла шкулсене вӑхӑтран вӑхӑта мар, пӗрмаях ӗҫлеттермелле.

Рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе инженерла-техникӑла работниксем нумай ӗҫлеме тивӗҫлӗ. Ӗҫ вӑйне мӗнле вырнаҫтарса тухнинчен, производствӑна мӗнле йӗркелесе ертсе пынинчен рабочисем нормӑна тултарасси килет. Цех начальникӗсемпе смена мастерӗсен производствӑна пӗр чӑрмавсӑр ӗҫлеме юрӑхлӑ туса организацилес пулать. Стахановецсемпе ударниксем панӑ рационализаторла сӗнӳсене ҫийӗнчех пӑхса тухса ӗҫе кӗртес пулать. Унпа пӗрлех тата рабочисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсем ҫинчен те манма юрамасть, стахановецсене хӑвӑрт тата тухӑҫлӑн ӗҫлеме кирлӗ условисене пурне те туса памалла. Предприятисенчи партипе профсоюз организацисен ку ыйтупа ытларах интересленмелле.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртупа стахановла движенире коммунистсемпе комсомолецсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Производствӑри кашни коммунистпа комсомолецӑн хисеплӗ тивӗҫӗ —стахановецсен ретне ӳстересси, хӑйсен примерӗпе, лайӑх ӗҫӗпе мӗнпур рабочисене ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарасси пулать. Коммунистпа комсомолец — малта пыракан работниксем. Пур ҫӗрте те —фабрикӑра, чугунҫул ҫинче, заводра, вӑрман ӗҫӗнче — вӗсен дисциплинӑпа йӗркелӗхӗн лайӑх тӗслӗхне кӑтартмалла.

Стахановла движени — пысӑк вӑй. Вӑл пирӗн халӑх хуҫалӑхне мирлӗ вӑхӑтра вӑйлӑн аталантарма пулӑшрӗ. Партипе правительство хавхалантарса пынипе, вӑл пирӗн Хӗрлӗ Ҫара нимӗҫ пусмӑрҫисене хирӗҫ ҫапӑҫма хӑватлӑн пулӑшать. Стахановла движени фронта мӗн кирлине пурне те тата вӑхӑтра парса тӑмалли май пулса тӑрать. Пирӗн умра ҫакӑн пек задача тӑрать: промышленноҫпа транспортри кашни работникпа работница ҫав майпа усӑ курма пултартӑр, стахановецсен ретне тӑтӑр. Вӗсен речӗ мӗн таран йышлӑрах пулӗ, фронт продукци ҫавӑн чухлӗ ытларах илӗ, ылханлӑ тӑшмана ҫӗнтерес вӑхӑт ҫывхарӗ.

Колхозсемпе МТС-сенче стахановла движение куллен вӑйлатса пырар!

ВКП(б) Шӑхасан райкомӗпе райсовет исполкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, тырпулсене пухса кӗртнӗ ҫӗрте пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартнӑшӑн тата лайӑх пахалӑхпа ӗҫленӗшӗн, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

13. Шуркасси ялсовечӗнче кӗрекен **«Первое Мая» колхоз** (колхоз председателӗ **П. А. Александров**). Колхоз 58 гектар ҫинчи кӗртыррисене—6 ӗҫ кунӗнче, 61 гектар ҫинчи ҫурхи тӗштырӑсене—8 ӗҫ кунӗнче лайӑх пахалӑхпа пухса кӗртнӗ. Кӗрхи тырӑсене 7 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ, августӑн 25-мӗш тӗлне кӗртырри кӗлтисене турттарса капана хывнӑ. Государствӑна тырӑ памалли плана 75 процент пурнӑҫа кӗртнӗ.

Тырпул пухса кӗртнӗ ҫӗрте 60 ҫулхи колхозница Н. Викторова, З. Емельянова, М. Иванова, П. Тарасова вӑрҫӑри пек ӗҫленӗ, вӗсем куллен ӗҫ нормине тырӑ вырнӑ ҫӗрте 150—200-шер процент тултарса пынӑ.

14. **М. Тимофеев** — Шӑхасан МТС-чи комбайнер. М. Тимофеев юлташ хӑйӗн комбайнӗпе 195 гектар ҫинчи тӗштырра пысӑк пахалӑхпа вырса пуҫтарнӑ, комбайнпа тырӑ вырса пуҫтармалли плана 77 процент ирттерсе тултарнӑ.

15. **В. Васильева** — Шӑхасан МТС-чи комбайнерка. Васильева юлташ хӑйӗн комбайнӗпе 150 гектар вырса пуҫтарнӑ, комбайнпа ӗҫлемелли плана 36 процент ирттерсе пурнӑҫа кӗртнӗ. Васильева юлташ малалла ӗҫлет.

Уйхирти стахановецсем

ШАМАРША, августӑн 28-мӗш. (Телефонпа). Тырпулсене пухса кӗртес ӗҫ «Победа», «Красный партизан» тата Космовский ячӗпе тӑракан колхозсенче ӑнӑҫлӑн пулса пырать, вӗсем ҫак кунсенче ҫуртыррисене вырса пӗтереҫҫӗ.

Уборкӑра «Красная звезда» колхоз членӗсем хастарлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Мария Сорокина, Вера Кузьмина, Иония Алинова ҫавапа ҫуртыррисене 0,75-шер гектар ҫулаҫҫӗ. 55 ҫулхи Тимофей Вирьялов капан тунӑ ҫӗрте нормӑна 200—250 процент тултарса ӗҫлет, пӗр кун хушшинче 30—40 лав тырра капана хывать. Ҫавӑн пекех Михаил Козлов та нормӑна 250 процент тултарса пырать.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Уборка ӗҫӗсене начар ертсе пынӑ ҫӗрте

ЙӖПРЕҪ. (Телефонпа). Августӑн 27-мӗшӗнче ялсовет исполкомӗсен тата колхоз правленийӗсен председателӗсен районри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура ялхуҫалӑх ӗҫӗсем мӗнле пулса пыни ҫинчен сӳтсе-яврӗҫ.

Район тырпулсене пухса кӗртессипе те, кӗрхи тырӑсене акассипе те кая юлса пырать. Августӑн 27-мӗш тӗлне кӗртыррисемпе ҫуртыррисен 71,7 процентне кӑна вырса пухнӑ. Мӗнпур лаптӑкри тырӑран 30 процентне капана хывнӑ. Кӗрхи ака планне 33 процент пурнӑҫланӑ. Государствӑна тырӑ парассипе виҫҫӗмӗш пилӗккунлӑхри графика тултарман, задание 50,7 процент кӑна пурнӑҫа кӗртнӗ.

Ялхуҫалӑх ӗҫӗсем ҫавӑн пек кая юлса пыни районри ҫӗрӗҫ пайӗ хӑйӗн ӗҫне кирлӗ пек оперативно туса пырайманнинчен килет. Ҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ Авдеев юлташ районра уборка мӗнле пулса пыни ҫинчен канашлура та тӗплӗн каласа пама пултараймарӗ. Вӑл уборкӑри тӗрлӗ ҫитменлӗхсем ҫинчен каларӗ, анчах кая юлса пынин тӗп сӑлтавне уҫса кӑтартаймарӗ.

Тӗрӗссипе уборка ӗҫӗ юлса пыни машинӑсемпе тата ҫавасемпе туллин усӑ курманнинче пулса тӑрать. Районри колхозсен 115 жнейка пур, вӗсенчен 50—60 машини кӑна тырӑ вырнӑ ҫӗрте ӗҫленӗ, косилкӑсемпе тырпулсене пухса кӗртнӗ ҫӗрте усӑ курман. Ҫавӑн пекех кӗреплеллӗ ҫавасемпе те сахал усӑ кураҫҫӗ. 750 ҫаваран 330 ҫавипе кӑна ӗҫлеҫҫӗ.

Ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче «Победа» колхоз (председателӗ Осипов юлташ), «Красный водник» (председателӗ Иванова юлташ), «Красный металлист» (Новиков юлташ) уйрӑмах кая юлса пыраҫҫӗ. Вӗсем тырӑсене ҫурринче ялӗн кӑна вырнӑ. «Победа» колхозӑн вырмалли тырӑ 270 гектар юлнӑ, анчах ӗнер 30 гектар кӑна вырнӑ. Кун пек ӗҫлесен тырӑ вырасси тепӗр вунӑ куна чӑсӑлма пултарать. Колхозра ӗҫ дисциплинине пӑсакансем йышлӑ. Чылай колхозниксем 8—9 сехетре кӑна тырӑ вырма тухаҫҫӗ, ӗҫрен ирех таврӑнаҫҫӗ. Учительсене уйхирте ӗҫлеме явӑҫтарман. Ку колхозӑн кӗрхи тырӑ акмалли лаптӑк 220 гектар юлнӑ, халӗ уйра 15 плугпа кашни кун 9—10 гектар сухалаҫҫӗ, вӗсен планпа 10—12 гектар сухаламалла. Ҫак колхозра ӗҫсем кая юлса пыни ҫинчен районри организацисем пӗлеҫҫӗ. ВКП(б) райкомӗн иккӗмӗш секретарӗ Антонов юлташ ҫак колхозра райкомӑн тата райсовет исполкомӗн уполномоченнӑйӗ пулса тӑрать. Анчах вӑл колхозри ҫитменлӗхсемпе килӗшет, вӗсене пӗтерме, колхозра большевикла йӗркелӗх тума кирлӗ мерӑсене йышӑнмасть.

«Красный водник» колхозра та учительсене тата ытти интеллигентсене ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫсене тума хутшӑнтарман. Унта пӗрчӗллӗ тырӑсен 60 процентне кӑна вырса пухнӑ, кӗраки планне 50 процент кӑна пурнӑҫланӑ.

Канашлу ялхуҫалӑхӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтермелли конкретнӑй мерӑсене палӑртса хӑварчӗ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Тырӑсене вырса пуҫтарнӑ

Чӑвашсен ялхуҫалӑх институчӗн вӗренӳ хуҫалӑхӗнчи рабочисем производствӑра тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Кӗрхи тырӑсене план тӑрӑх пилӗк кунта акса пӗтерме пӑхнӑ пулсан, икӗ кун хушшинче акса пӗтерчӗҫ. Тракторист Корнилов юлташ «СТЗ» тракторпа сменӑра 4,5 гектар сухалас вырӑнне 10 гектар сухаласа пынӑ.

Тырӑ вырнӑ ҫӗрте Николаева юлташ жнейкӑпа ӗҫлет, сменӑра норма ҫурӑ туса пычӗ. Ялхуҫалӑх институчӗн студенткисем Васильевӑпа Сбруева юлташсем кӗлте ҫыхнӑ ҫӗрте нормӑна 120—130 процент тултарса ӗҫлерӗҫ. Рабочисем Савельева, Киселева, Журавлева тата ыттисем те ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче нормӑсене ирттерсе тултараҫҫӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх ферминче ӗҫлекенсем Алексеева, Черемшанова тата Журавлева юлташсем кӑнтӑрла уборкӑра ӗҫлеҫҫӗ.

Вӗренӳ хуҫалӑхӗнче тырпулсене йӑлтах машинӑсемпе вырса ҫапаҫҫӗ. Механик Николаев юлташ машинӑсене вӑхӑтра юсаса тӑрать, ҫавна пула машинӑсем пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеҫҫӗ.

Ку хуҫалӑхра пӗрчӗллӗ тырӑсене вырса пӗтернӗ ӗнтӗ, авӑн ҫапса пӗтереҫҫӗ. Уйра ҫӗрулмипе кӑшман кӑна юлать.

М. СМЕТАНИН.

Ҫуртыррисене вырса пӗтерчӗҫ

КАЛИНИНО. Ямбахтинӑри «Партизан» колхоз августӑн 21-мӗшне ҫуртыррисене планпа пӑхнӑ срокра вырса пӗтерчӗ. Ҫавӑн пекех, Хурӑн Кӑкшӑмри — «Красноармеец», Шуркассинчи — «Социализм», Шӗнерпи—«1-ое Мая», Кӑмпалти—«Новый путь» колхозсем те ҫак вӑхӑт тӗлне пӗрчӗллӗ тырӑсемпе пӑрҫа йышши культурӑсене вырса тата ҫулса пуҫтарчӗҫ.

Г. АНДРЕЕВ.

Кӗракине вӗҫленӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августӑн 26-мӗш. (Телефонпа). Карай ялсоветӗнчи «Красная звезда» колхоз кӗрхи тырӑсене 8 кун хушшинче, августӑн 23-мӗшӗнче акса пӗтерчӗ. Акара сеялкӑсемпе туллин усӑ курнӑ. Сеялщиксем С. Сотников, С. Анисимов, Е. Григорьев юлташсем нормӑна кулленех 120—140 процент тултарнӑ. Колхоз планран ирттерсе 17 гектар акрӗ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Паян—воскресник

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен хӗрлӗ обозӗсем

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗ, Саратов облаҫӗнчи комсомолецсен пуҫарӑвне ырласа, пирӗн республикӑра августӑн 30-мӗшӗнче хӗрлӗ обозсемпе государствӑна тырӑ леҫсе памалли воскресник тума йышӑннине илтсенех, комсомолӑн Сӗнтӗр райкомӗ ҫак ӗҫе организацилеме тытӑнчӗ.

Районри колхозсенче нумайӗшӗнче воскресника ирттерме тӑрӑшсах хатӗрленчӗҫ. Комсомолӑн Муркашри пуҫламӑш организацийӗ «Авангард» колхозран 45 лавлӑ обозпа тырӑ леҫме кайма хатӗрлесе ҫитнӗ. Ахманейри комсомол организаци (секретарӗ А. Пигалев) «Путь Ленина» колхозра 14 лавлӑ обоз хатӗрлесе ҫитернӗ, Калайкассинчи «Безбожник» колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем 16 лавлӑ хӗрлӗ обозпа хатӗрлев пунктне тырӑ турттарса каяҫҫӗ.

А. ИВАНОВА.
ВЛКСМ Сӗнтӗр райкомӗн секретарӗ.

* * *

СӖНТӖРВӐРРИ. (Телефонпа). Комсомолӑн колхозсенчи пуҫламӑш организацийӗсем тылайӗшӗ хӗрлӗ обозсемпе тырӑ леҫме кайма хатӗрленсе ҫитнӗ. Паян Турханкассинчи «Верный путь» колхоз 20 тонна, Шуршӑлти Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз—120 центнер, Паникассинчи «Шортан» колхоз—170 центнер хатӗрлев пунктне леҫеҫҫӗ.

Н. БОРЗОВ.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту

Стахановецсен кунне ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернипе паллӑ тӑваҫҫӗ

КАНАШ, августӑн 29-мӗш. (Телефонпа). Стахановла движени пуҫланнӑ куна вагонсем юсакан заводри малта пыракан бригадӑсемпе рабочисем ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе паллӑ тӑваҫҫӗ.

Вагонсем юсакан цехри слесарьсен стахановла бригади (бригадирӗ Чесов юлташ) уйӑхри задание срокчен тултарчӗ. Халӗ бригада вагонсене задани рен ирттерсе юсать, августӑн 28-мӗшӗнче сменӑри нормӑна 436 процент тултарчӗ. Ҫавӑн пекех, столярсен Высоцкий юлташ ертсе пыракан бригади те пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлет. Нормӑна вӑл пӗрмаях 300—350 процент тултарса пырать. Чернухинпа Капелюха юлташсен бригадисем кулленех 2—2,5 норма тултараҫҫӗ.

Фронтпа ҫӗршыва продукци ытларах парассишӗн тӑрӑшса, уйрӑм рабочисем нихӑҫанхинчен пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартаҫҫӗ. Тимӗр-тӑмӑр шӑратакан цехри стахановец Крупенко юлташ хӑйӗн нормине 500 процент таран тултарать. Паллӑ стахановец Басс юлташ августӑн 28-мӗшӗнчи задание 7 хут ирттерсе пурнӑҫларӗ. Механически цехри Минько, тепӗр цехри Бирюков токарьсем те тӑтӑшах 4-шар норма тултараҫҫӗ.

Стаханов пек тухӑҫлӑ ӗҫлекенсен хисепӗ заводра кунран-кун ӳссе пырать. Вӗсем августри плана ӑнӑҫлӑн тултарас, Ҫулйӗр Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне аларан вӗҫертес мар тесе тӑрӑшаҫҫӗ.

Н. КУКЛЕНКО.

Вӑрман ӗҫӗнчи стахановецсем

ЙӖПРЕҪ, августӑн 29-мӗш. (Телефонпа). Виҫҫӗмӗш кварталта вӑрман хатӗрлес плана Йӗпреҫ леспромхозӗ 62 процент тултарчӗ. Районсенчен Йӗпреҫпе Шупашкар районӗсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем кулленхи заданисене пӗрмаях ирттерсе тултараҫҫӗ. Канашпа Октябрьски районсем вара малтанхи пекех юлса пыраҫҫӗ.

Вӑрманта пӗр уйӑх ӗҫленӗ хушӑра рабочисенчен чылайӗшсем стахановецсен ретне тӑчӗҫ. Нормӑпа кашни рабочин куллен 2 кубометр касмалла е турттармалла. Вӑрманта ӗҫлекенсенчен пурӗ 96 ҫын ҫак нормӑна 150 процент тултараҫҫӗ. Августӑн 28-мӗшӗнче рабочисем пурте нормӑна ирттерсе тултарчӗҫ. Ҫурран ӗҫлекенсем 205 ҫын 425 кубометр касса хатӗрлерӗҫ, лашапа ӗҫлекенсем 126 ҫын 431 кубометр турттарса тухрӗҫ.

Уйрӑмах Йӗпреҫ районӗнчи партин XVII-мӗш съезчӗ ячӗпе тӑракан колхозран пынӑ В. Чураков стахановецӑн ӗҫне палӑртмалла. 24 кун хушшинче вӑл 114,5 кубометр йывӑҫ касса хатӗрлерӗ, 721 тенкӗ ӗҫлесе илчӗ. Ҫавӑн пекех «Красный металлист» колхоз членӗ Л. Афанасьев юлташ та, турттарас нормӑна кашни кун 200—250 процент тултарса, 700 тенкӗ ытла ӗҫлесе илчӗ.

Стахановецсен тухӑҫлӑ ӗҫӗ ытти рабочисене те тӑрӑшса ӗҫлеме хавхалантарать. Шупашкар районӗнчи «Культура» колхозран пынӑ Барилло рабочи кашни кун вӑтамран 5 кубометр йывӑҫ касса хатӗрлет. Паянхи куна вӑл пурӗ 87,5 кубометр касса хатӗрленӗ. Лучковӑй пӑчкӑпа ӗҫлесе, Барилло юлташ кунран кун пысӑкрах ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартать.

П. ФЕДОРОВ,
Леспромхоз директорӗ.

Ӑмӑртури ҫитӗнӳ

Шупашкар пристанӗ (начальникӗ Валатин юлташ) иртнӗ уйӑхсенче сӳрӗкрех ӗҫлесе пычӗ. Августра коллектив, социализмлӑ ӑмӑртӑва тивӗҫлипе организацилесе, производствӑллӑ ҫитӗнӳ турӗ. Пристань грузсем турттармалли уйӑхри задание срокчен тата ирттерсе тултарчӗ.

Таварсем турттаракан чылай суднӑсем августра ӗҫ графикне тикӗс пурнӑҫласа пычӗҫ. Малышевпа Скрябин юлташсем ертсе пыракан суднӑсем пӗр чарӑнмасӑр тата ҫӗмӗрӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Суднӑсем ҫинче тасалӑхпа йӗркелӗх тунӑ.

Пристанӗн старши диспетчерӗ Кремнев юлташ, вырӑнти флотӑн ӑста командирӗ, пароходсемпе суднӑсем ҫӳрессине лайӑх йӗркелесе тӑрать. Работник Васильев юлташ таварсене вӑхӑтра йышӑнса ӑсатса тӑрать. Грузчиксем Пушков, Сергеев тата ытти юлташсем хушнӑ ӗҫсене ҫийӗнче тата пӗр сӑмахсӑр тӑваҫҫӗ.

Анчах пристанӗн ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем те нумай-ха. Уйрӑм работниксен сӳрӗклӗхне пула, хӑшпӗр суднӑсем эрни-эрнипе ахаль лараҫҫӗ. Эпир ҫӗршыв умӗнче тата иртнӗ уйӑхри ӗҫсемпе те парӑмлӑ. Пирӗн задача—ҫав парӑма пӗтересси сезонри ӗҫсен планне ӑнӑҫлӑн тултарасси пулать.

М. ИЩИН.
Местком председателӗ.

Плана кашни уйӑхрах ирттерсе тултарать

Шупашкарти эрех завочӗ уйӑхран уйӑха ӑнӑҫлӑрах ӗҫлесе пырать. Завод июньпе июль уйӑхӗсенче продукцие планран чылай ирттерсе туса кӑларчӗ, ку уйӑхри плана та срокран 5 кун малтан тултарчӗ. Уйӑх вӗҫлениччен завод коллективӗ планран ирттерсе татах та темиҫе пин тенкӗлӗх продукци пама ӗмӗтленет.

Августри ӑмӑртура, июльри пекех, ликерсем тӑвакан цех (заведующийӗ К. Малышева юлташ) малта пычӗ. Цех коллективӗ хӑйӗн ӗҫ планне 186 процент тултарчӗ. Цехри работницӑсенчен уйрӑмах Петухова стахановкӑн ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пысӑк. Хӑйӗн нормине вӑл 200 процента яхӑн тултарать. Филиппова работница та кӗленчесем ҫӑвас тата эрех тултарас ӗҫсен нормине 171 процент пурнӑҫлать.

Р. ГЕРСТРУК,
План отделӗн начальникӗ.

Хӗрлӗ ялава алӑрах хӑварассишӗн

Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илнӗ Н-ски завод коллективӗ августри производство программине тултарассишӗн мӗнпур вӑя хурса кӗрешнӗ.

Завод плана тултарас ӑнӑҫлӑх пирӗн тӗп цех ӗҫӗнчен нумай килет. Ҫавӑнпа цех коллективӗ графика тӗрӗс пурнӑҫласа пырать, изделисене планпа палӑртнӑ чухлӗ кӑларса тӑрать. Детальсене пӗтӗҫтерекен участоксен мастерӗсем Малыхинпа Бубликов, хатӗрлекен участокӑн старши мастерӗ Коневский лайӑх ертсе пыраҫҫӗ. Вӗсем плана кашни рабочи, кашни станок тӑрӑх тултармалла тӑвассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Июль уйӑхӗнчи ӗҫсене кура, пирӗн цех заводӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илчӗ. Ҫак хисеп пирӗн рабочисемпе работницӑсене татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме хавхалантарчӗ. Хатӗрлев участокӗнчи слесарь-стахановецсем Заводская тата Бондарь юлташсем нормӑна тӑтӑшах 250—300 процент тултараҫҫӗ. Детальсене пӗтӗҫтерекен участокри Яковлевпа Шимлык юлташсем те нормӑран чылай тухӑҫлӑрах ӗҫлеҫҫӗ.

Чиркова, Хренова хӗрачасем завода 2 уйӑх каялла ҫеҫ килсе кӗнӗ. Фронта мӗнпур вӑйран пулӑшас ӗмӗтпе вӗсем ӗҫе хӑвӑрт вӗренсе ҫитрӗҫ, халӗ нормӑна Чиркова 250 процент, Хренова 189 процент тултараҫҫӗ.

Стахановла тухӑҫлӑхпа ӗҫлекенсен йышӗ цехра кунран кун хутшӑнса пырать.

А. КИНЗБУРГСКИЙ.
Цех начальникӗ.

Хӗле валли торф

ЕТӖРНЕ, августӑн 29-мӗш. (Телефонпа). Торф кӑларакан предприяти коллективӗ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура лайӑх ӗҫлет. Коллектив июль уйӑхӗнчи ӗҫ планне срокченех вӗҫлерӗ, августри плана та 27 кун хушшинче 130 процент тултарчӗ.

Предприятин план тӑрӑх 2.500 кубометр торф кӑлармалла. Хальхи вӑхӑта 3.426 кубометр кӑларнӑ. Вӑл шутран 3.375 кубометрне учрежденисемпе предприятисем турттарса тухнӑ.

Ҫак ӗҫре чылай рабочисем хӑйсене панӑ заданисене ытлашшипех тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Стахановец В. Наркевич юлташ нормӑпа 2 кубометр вырӑнне 3,25 кубометр торф кӑларать. Ҫавӑн пекех Р. Кринберг, М. Дюдина, М. Данилова, Т. Чубукова, Х. Ахильсон, М. Борисова юлташсем те нормӑна 130—160 процент тултараҫҫӗ.

Рабочисем хушшинче массӑллӑ агитаци ӗҫне аван йӗркеленӗ. ВКП(б) членӗ Болтунова юлташ каннӑ вӑхӑтра хаҫат-журналсем вуласа парать, фронтри ӑлшӑнусем, тӗнчери лару-тӑру ҫинчен каласа кӑтартать.

А. КРАСНОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Августăн 28-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Августăн 28-мӗшӗнче пирӗн войскăсем Ржев хули хӗррисенче, Клетскаяран кăнтăр-хӗвелтухăçнерехре, Сталинградран çурçӗр-хӗвеланăçнерехре, Котельниковăран çурçӗр-хӗвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата Прохладный, Моздок районӗсенче тата Краснодартан кăнтăр-тарахра çапăçнă.

Фронтăн ытти участокӗсенче нимӗнле улшăну та пулман.

Хура тинӗсре пирӗн карапсем противникăн подводнăй лодкине путарнă.

* * *

Августăн 27-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем фронтăн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗçсен 25 танкӗпе бронемашинине çунтарса, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине ытла, боеприпассем тиенӗ 40 лавне çапса, горючи тултарнă 12 автоцистернине пӗтерсе тăкнă е сиенленӗ, полевой тата зенитлăй артиллерин 8 батарейине путарса лартнă, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янă, противникăн пехотине 2 батальона çити çапаласа янă, пӗр пайне пӗтерсе тăкнă. Балти тинӗсӗнче пирӗн авиаци нимӗçсен транспортне путарнă.

* * *

Хӗвеланăç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн войскăсем активлă çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнӗ. Щеглов юлташ командир пулса тăракан часть халăх пурăнакан виçӗ пункта йышăнса илнӗ. Г. пункчӗшӗн пынă çапăçура кăна 100 гитлеровеца ытла пӗтерсе тăкнă, 10 пулемет тата боеприпассемпе çар пурлăхӗ нумай тытса илнӗ. Бурлыт юлташ ертсе пыракан танкистсем 6 противотанковăй орудине, 6 миномет пӗтерсе тăкнă тата гитлеровецсене пӗр ротăна çити вӗлерсе пӗтернӗ. Исламов лейтенантпа Мягкоголовый политрукăн танк экипажӗ, чакакан нимӗçсен тылне кӗрсе кайса, 90 гитлеровеца ытла пӗтерсе тăкнă. Фронтăн тепӗр участокӗнче пирӗн стрелковăй подразделени, танксем пулăшса пынипе, халăх пурăнакан пункта, противник хирӗç тăмалли вăйлă çирӗплетнӗ узел туса хунăскере, çӗмӗрсе кӗрсе кайнă.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланăçнерехри районра пирӗн войскăсем противникăн пирӗн оборонăна шала кӗрсе кайнă группировкине хирӗç хаяррăн çапăçнă. Нимӗç войскисем, çавăн пекех тата вӗсемпӗн ӗçлеме кӗрӗшнӗ итальянецсемпе румынсем, питех те пысăк çухатусем тӳсеççӗ. Н-ски чаçри гвардеецсем икӗ кун хушшинчи çапăçусенче гитлеровецсен йышлă атакисене сире-сире янă, унтан, контратака туса, тăшмана халăх пурăнакан пӗр пысăк пунктран хӗссе кăларнă. Çав çапăçусенче гвардеецсем противникăн салтакӗсемпе офицерӗсене 2.500 çынна çити пӗтерсе тăкнă. Гвардеец-минометчиксемпе танкистсем противника уйрăмах пысăк çухатусем тӳстереççӗ. Противник пухăнса тăнă вырăна харăссăн пере-пере ярса, пирӗн минометчиксем артиллерин 8 батарейине, минометсен 10 батарейине, 12 танк тата 100 автомашина ытла пӗтерсе тăкнă. Н-ски танковăй чаçăн разведки тăшманăн танкӗсемпе пехоти пӗр çӗре пухăнса тăнине пӗлнӗ. Противник пухăнса тăнă айлăма çаварса илсе, танкистсем хаяр çапăçура нимӗçсен 9 танкне пӗтерсе тăкнă тата 300 гитлеровеца çити вӗлернӗ.

* * *

Котельниковăран çурçӗр-хӗвелтухăçнерехри районра пирӗн войскăсем противникăн атакисене сире-сире янă. Пӗр участокра нимӗçсем кăштах малалла кайма пултарнă. Анчах та, контратака туса, ăна каялла хăваласа янă. Çав çапăçура 4 танк тата гитлеровецсене 2 ротăна çити пӗтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахра пирӗн чаçсем противник пирӗн оборонăна татса кӗме хăтланнисене сире-сире янă. Çав çапăçусенче нимӗçсен пехоти 2 ротăна çити пӗтнӗ. Тепӗр участокра Собченюк юлташ ертсе пыракан моряк-артиллеристсем нимӗçсен 7 танкне, артиллерин 2 батарейине тата противникăн пехотине пӗр батальона çити пӗтерсе тăкнă.

Прохладныйăран кăнтăр-хӗвелтухăçнерехри районра парашютистсен-автоматчиксен ушкăнне пӗтерсе тăкнă, пӗр пайне тыткăна илнӗ.

* * *

Рабочисен-нефтяниксен К. юлташ ертсе пыракан партизанла отрячӗ, Çурçӗр Кавказăн нимӗçсем тытса илнӗ районӗсенчен пӗринче организациленнӗскер, противникăн обозне тапăннă. Партизансем обозăн хуралне вӗлерсе пӗтернӗ те çар пурлăхӗ тиенӗ лавсене тытса илнӗ. Çав отрядри партизансен пӗр ушкăнӗ çул çинче засада туса 20 гитлеровеца пӗтерсе тăкнă.

* * *

Латвири партизансен темиçе отрячӗ нимӗç захватчикӗсене хирӗç пынă çапăçусенче противникăн 213 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тăкнă. Партизансем пӗр танка çунтарса янă тата нимӗçсенчен 8 пулемет, винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнӗ.

* * *

Нимӗçсен 328-мӗш пехотнăй дивизийӗнчи 548-мӗш полкри ефрейтор Ричард Я., Хӗвеланăç фронтӗнче хăйӗн ирӗкӗпе тыткăна парăннăскер, çапла каласа панă: «Манăн ротăра 180 çын пулнă. Вырăссем наступлени тума пуçласан 2 кунтан ротăра мӗнпурӗ те 25 çын çеç тăрса юлчӗ. Пире вырăссен артиллерийӗ ытла та пысăк сиен кӳчӗ. Чӗрӗ юлнă салтаксем пурте шуçӗсене усрӗç. Вӗсем пӗр çакăн çинчен çеç пуххăшлаççӗ: «Пире Российйăран чӗррӗн тухса кайма май килӗ-ши, çук-ши, теççӗ».

* * *

Нимӗçсен 292-мӗш пехотнăй дивизийӗнчи 507-мӗш полкăн 3-мӗш батальонӗнчен тыткăна илнӗ кӗçӗн врач Эрих Димель çапла каласа панă: «Кăçалхи майра мана Торн хули çывăхӗнче (Германия) тыткăнри вырăс çыннисем валли тунă лагерьте мӗнле пурăннине сăнама май килчӗ. Çав лагерьте тыткăна лекнӗ вырăссем тата Украинăран илсе тухнă граждăнла çынсем пурăнатчӗç. Çавăнта хупнă çынсен пурнăçне, пӗр ӳстерсе каламасăрах, тамăкри пек теме пулать. Вӗсем выçăпа тата ытла нумай ӗçленипе начарланса кайнă. Тыткăнрисем хушшинче сыпной тиф сарăлса кайнă. Çав лагерьте куллен 8—10 çын вилетчӗç. Юлашки вăхăтра вăл лагере хураллакан эсэсовецсем чирлисене пурне те пере-пере вӗлеретчӗç».

* * *

Шер департаментӗнче (Франция) нимӗç оккупанчӗсем машинăсем тăвакан заводри 200 рабочие ирӗксӗр Германие ӗçлеме яма хăтланса пăхнă. Заводра çавăн пек ирӗксӗр янине хирӗç забастовка пуçланса кайнă. Вара администраци гитлеровецсем хушнипе, завода хупни çинчен пӗлтернӗ те мӗнпур рабочисене продовольстви карточкисемсӗр тăратса хăварнă. Анчах та оккупантсем рабочисене ӗçсӗр хăварассипе тата выçăпа хăратса та фашистла Германие яма пултарайман.

Августăн 29-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Августăн 29-мӗш ирхи тенӗ чух çӗрле пирӗн войскăсем противника хирӗç Ржев хули хӗррисенче, Клетскаяран кăнтăр-хӗвелтухăçнерехре, Сталинградран çурçӗр-хӗвеланăçнерехре, Котельниковăран çурçӗр-хӗвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата Прохладный, Моздок районӗсенче тата Краснодартан кăнтăртарахра çапăçнă.

Фронтăн ытти участокӗсенче нимӗнле улшăну та пулман.

Баренц тинӗсӗнче пирӗн карапсем противникăн пӗтӗмпе 12.000 тонна водоизмещениллӗ 2 транспортне путарнă.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланăçнерехри районра пирӗн чаçсем противникăн танксемпе тунă темиçе атакине сирсе янă, унтан, контратака туса, гитлеровецсене каялла чакарнă. Çав çапăçура нимӗçсенчен 12 орудипе, 24 пулемет тата боеприпассем тытса илнӗ. Тепӗр участокра противникăн пирӗн оборонăна шăтарса кӗрсе кайнă танкӗсемпе мотопехотине хирӗç хаяррăн çапăçнă. Çав çапăçусенче нимӗçсен фашистла войскисем чӗрӗ вăйпа техника тӗлӗшӗнчен каллех пысăк çухатусем тӳснӗ.

* * *

Котельниковăран çурçӗр-хӗвелтухăçнерехри районра пирӗн пӗр чаçăн боецӗсем противникăн атакине сирсе янă. нимӗçсен 2 танкне тата 150 гитлеровеца пӗтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахра пирӗн войскăсем Н. высотăшăн пынă çапăçусенче нимӗçсен 97-мӗш çăмăл пехотнăй дивизийӗнчи 204-мӗш полка аркатса тăкнă. Противникăн 6 танкне тата темиçе çӗр салтакӗпе офицерне пӗтерсе тăкнă. Тепӗр участокра Константинов юлташ ертсе пыракан моряксем-минометчиксем минометсенчен персе 100 гитлеровеца ытла пӗтерсе тăкнă.

Прохладный районӗнче çапăçусем пынă, çав çапăçусенче нимӗçсен 3 танкне тата противникăн пехотине пӗр ротăна çити пӗтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн подразделенисем юлашки пилӗк кун хушшинче противникăн, çухатнă рубежӗсене каялла тытса илме тăрăшаканскерӗн, атакисене сире-сире янă. Çав çапăçусенче нимӗçсен 2 танкне, 3 орудине, 17 станковăй пулеметне тата противникăн пехотине пӗр батальона çити пӗтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнӗ тата тыткăна илнӗ.

* * *

Совет патриоткине—партизанка Нина Коровкона Невель хули çывăхӗнче боевой задание пурнăçланă вăхăтра нимӗçсен фашистла бандичӗсем тытнă. Гитлеровецсем, партизансем çинчен калаттарас тесе, Нина Коровкона тискеррӗн асаплантарнă, унтан вара çакса вӗлернӗ. Совет çӗршывӗн мухтавлă хӗрӗ çав асапсене çирӗппӗн тӳссе ирттернӗ, вилес умӗн вăл фашистла ирсӗрсене çапла каланă: «Эпӗ паян хамăн тăван çӗршывшăн вилетӗп, анчах ыран сире пурне те пӗтерсе тăкӗç. Сывă пулччăр партизансем!» тенӗ.

* * *

Çурçӗр Кавказра противникăн тылӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗсем нимӗçсен фашистла войскисене пысăк çухатусем тӳстереççӗ. Партизансем противникăн çыхăнăвӗсене кашни кун ăнăçлăрах пăсса пыраççӗ. Партизансен пӗр отрядне хирӗç кӗрешме нимӗçсем Румынисен полкне янă. Партизансене хирӗç пынă çапăçусенче 400 салтакпа офицера çити çухатса, румын воякӗсем каялла чакнă. Партизансем хӗçпăшалсем тата çар пурлăхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Нимӗçсен 209-мӗш пехотнăй полкӗнчи салтак Вилли Штраух çумӗнче, Ленинград фронтӗнче вилнӗскер çумӗнче, ун патне Кенигсберг хулинчен арăмӗ янă çырăва тупнă. Вăл çырура çапла каланă: «Пирӗн хулана вырăссем сывлăшран пырса тапăнни çинчен эсӗ илтнӗ пуль ӗнтӗ. Кунта мӗн пулнине эпӗ сана каласа та пама пултараймастăп. Питех те хăрушă ӗçсем пулчӗç. Темиçе кунтан вырăссем иккӗмӗш хут пӗçсе килсе тапăнчӗç. Манăн нервăсем йăлтах пăсăлчӗç. Халӗ эпӗ вырăн çинче выртатăп. Вӗсем тата тепӗр хут килес пулсан, мӗн тăвăпăр-ши вара?»

* * *

Германири урамсенче фашизма хирӗçле лозунгсем час-часах тӗл пула пуçларӗç. Дюссельдорф хулин пӗр урамӗнче çӗрле пӗр çуртăн стени çине «Гитлер пӗп пултăр!» тесе çырса хунă. «Рейнметалл» предприятийӗн алăкӗсем çине такамсем çапла çырса хунă: «Эпир миршӗн тăрăшатпăр, çавăнпа майӗпен ӗçлетпӗр. Вилӗм Гитлера, пӗттӗр вăрçă», тенӗ. Гестапо çынсене йышлăн арестлет.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончӗсенче

Зубцов хулине мӗнле илнӗ

КАЛИНИН ФРОНЧӖ, августăн 28-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Боецсем тăшмана хыçӗнченех хăваласа пынă. Малта вырăссен авалхи хули—Зубцов пулнă. Н-ски часть çакăн пек задани илнӗ: противника Юркино ялӗнчен хăваласа кăлармалла, Персиановски вăрмана фашистсенчен тасатса, çав вăрманпа пымалла та Зубцов çывăхӗнчи машинно-тракторнăй станци патне пырса тухмалла.

Атăл патне чаксан нимӗçсем вăйлăн хирӗç тăнă, вӗсем пирӗн войскăсене ял патӗнче е Зубцов районӗнче тытса чарма шухăшланă. Пирӗн подразделенисем противника хăйӗн вăйӗсене урăхла йӗркелесе тăратма май памасăр, малалла та малалла кайнă.

Сутăласпа батальон командирӗ Христофоров çынсене атакăна илсе кайнă. Стрелоксемпе автоматчиксем пӗр çын пек харăс ура çине тăнă та атакăна ыткăннă. Нимӗçсем пур йышпи хӗçпăшалсенчен те пеме пуçланă, анчах та пирӗн войскăсем питӗ вăйлăн хӗсни вӗсене пусарса лартнă. Фашистсем васкасах каялла чакма тытăннă. Вӗсем ӗнтӗ Хӗрлӗ Çарăн чаçӗсене малалла кайма чарма пултарайман.

Пирӗн боецсем Персиановски вăрмана пульăсемпе тураса илсе, унтан фашистсен автоматчикӗсене хăваласа кăларнă, МТС-а йышăнса илнӗ, унтан противник хыççăнах хулана çӗмӗрсе кӗрсе кайнă. 11 сехетре Зубцов хулин çурçӗр-хӗвелтухăç пайӗ пирӗн алăра пулнă. Çав вăхăтра кăнтăрпа кăнтăр-хӗвеланăç енӗсенчен Зубцов патне тепӗр чаçăн боецӗсем пынă. Нимӗçсем васкаса Атăлăн тепӗр енне чакнă та кӗпере сирпӗнтерсе янă, вӗсем Атăлăн тепӗр енче оборона организацилеме шутланă. Анчах вӗсем хăйсемпе пӗрле хӗçпăшалсем, боеприпассем тата складсене илсе кайма та ӗлкӗреймен. Совет чаçӗсем, çурçӗрпе кăнтăр-хӗвелтухăçӗнчен вăйлăн хӗссе пырса, хулана противникран тасатнă, Зубцов çинче çӗнӗрен Хӗрлӗ ялав вӗлкӗшме тытăннă. Çав вăхăтра пирӗн войскăсем, Атăл урлă каçса, тăшмана çапа-çапа аркатса пынă, ăна хӗвеланăçнелле хăваланă.

Хула хыçӗнче çӗнӗрен пуçланса кайнă çапăçусем кӗрлесе тăнă вăхăтра Зубцов ӗççыннийӗсем митинга пухăннă. Çапăçу вăхăтӗнче Зубцов çыннисем подвалсенче ларнă, вӗсем хăйсене çăлакана—Хӗрлӗ Çара кӗтнӗ. Халӗ ӗнтӗ вӗсем боецсене кӗтсе илме урамсене тухнă. Нимӗç оккупацийӗн хăрушлăхӗсене чăтса ирттернӗ çынсен савăнăçӗ ытла та пысăк! Çынсем çӗнӗрен ирӗке тухнă. Ирӗклӗхе туйни, алăсем ирӗкленнине туйса тăни вӗсене кӗрешӗве тата ӗçе чӗннӗ. Тепӗр куннех вӗсем хулана нимӗçсен ăпăр-тапăрӗсемпе усал шăршисенчен тасатса, оборонăллă ӗçсем тунă, Хӗрлӗ Çара гитлерла захватчиксене пӗтерме пулăшнă.

В. СОБОЛЕВ.

Ирӗке кăларнă Карманово районӗнче

СМОЛЕНСК ОБЛАÇĔ, августăн 27-мӗш. (ТАСС). Нимӗçсен фашистла войскисене хăвалăн пырса çапса, Хӗрлӗ Çар Карманово районӗнчи халăха гитлерла тыткăнран çăлса кăларчӗ. Сунтарса янă ялсем нумай километрсем хушшинче сарăлса выртаççӗ. Районри 80 яла çӗр çинчен пуçӗпех шăлса пăрахнă. 7 ялта темиçешер çурт кăна тăрса юлнă. Ирӗке кăларнă халăх пурăнакан 89 пунктран 2 ял кăна — Новая Трутня тата Песочня ялӗсем кăна упранса юлнă.

Халăхран ытларахӗш пайне нимӗç ирсӗрӗсем чуралăха хăваласа кайнă. Шарапово, Савинск тата Павлов ялсовечӗсенче пӗр çын та юлман. Совет хресченӗсен мӗнпур выльăх-чӗрлӗхсемпе пурлăхӗсене çаратса ишӗлтерсе пӗтернӗ. Çуркунне гитлерла ирсӗрсем халăха çуртыррисем актарма хăтланнă. Анчах та çак ӗçрен нимӗн те тухман. Совет хресченӗсем нимӗçсемшӗн ӗçлеме килӗшмен. Кил вырăнӗсенче те, уйхирте те нимӗнле çуртырри те акман. Халӗ ирӗке кăларнă ялсенчи çынсен 60 процентӗ выçăпа шыçăнса кайнă, çӗршер çын вилсе пӗтнӗ. Пӗр Песочня ялӗнче кăна выçăпа 300 çын ытла вилнӗ.

Гитлеровецсем районра оккупациллӗ çавтери тискер режим туса хунă. Кашни 8 ял пуçне нимӗçсен комендатурине лартнă. Вӗсенче совет çыннисене этемле мар асаплантарнă. Песочня, Кривцы, Ребинки тата ытти ялсенче виселицăсем тунă. Халăха пӗр ялтан тепӗр яла тухса çӳреме чарнă. Кашни гражданинăн мăйӗ çинче вăл миçемӗш номер пулнине тата хăш ялтине кăтартса фанерăран тунă бирка çакса çӳремелле пулнă.

Совет хресченӗсен нимӗç пусмăрӗнче мӗн тӳссе ирттерме лекни çинчен халăхсем хăйсем çырнă актсем уççăн каласа параççӗ.

Новая Трутня ялӗнчи граждăнсем Наталья Гнумаева, Евдокия Булганова, Евдокия Лотова çакăн пек акт çырнă:

«Нимӗç оккупанчӗсем пирӗн яла килсе кӗрсен фашистла йӗрке туса хучӗç: мӗнпур арçынсене хӗрарăмсенчен уйăрса, 13-мӗш тата 28-мӗш номерлӗ çуртсенче, хӗрарăмсене вара — 23-мӗш тата 29-мӗш номерлӗ çуртсенче вырнаçтарчӗç. Хупса лартнă çуртсенчен мӗнпур хӗрарăмсемпе арçынсене тата 12 çултан иртнӗ ачасене нимӗçсем конвойпа сыхласа ӗçе илсе тухатчӗç. Ӗçре халран кайнă çынсене пурне те патаксемпе хӗнетчӗç.

Нимӗçсем пӗтӗм халăха çаратса пӗтерчӗç. Тырпулпа çӗрулмине тата мӗнпур выльăх-чӗрлӗхе туртса илчӗç. Çавна пула халăх выçă тăрса юлчӗ, çынсем выçăпа шыçăнса кайса нумай вилсе пӗтрӗç».

Евдокия Маркова, Федор Прохоров, Зинаида Нестерова, Иван Громов колхозниксем фашистсен Песочня ялӗнчи тискер кайăкла ӗçӗсем çинчен акт çырнă. Çав акта илсе кăтартатпăр:

«Фашистла оккупантсем пирӗн яла килсе кӗрсенех, мирлӗ халăха çаратма тытăнчӗç. Фашистла ирсӗрсем халăха кӳршӗ ялсемпе хутшăнма чарчӗç, кашни çын çине фанерăран тунă биркăсем çактарчӗç. Унта кашни çыннăн мӗнле номер пулнине тата вăл мӗнле ялта пурăннине нимӗçле çырса кăтартнă. Çавăн пек биркăсене 12 çултан иртнӗ кашни çыннăн çакса çӳремелле пулнă, кашни çыннăн пысăккӗшне, унăн çӳçӗсем, куçӗсем мӗнле тӗслине, урисемпе пӳрнисем мӗн тăршшӗ пулнине çырса тухнă. Ял тăрăх номерсӗр çӳренӗшӗн хыттăн айăплатчӗç — 25-шер хут розгăпа çапатчӗç е çӗрлене сивӗ çӗре хупса хуратчӗç.

Кашни кун мирлӗ совет çыннисем выçăпа вуншарăн вилетчӗç. Пирӗн куç умӗнчех 300 çын вилчӗ».

Халӗ районра совет йӗрки тăваççӗ. Асап курнă халăха пулăшу параççӗ.

Ютçӗршывсенче

ИККӖМӖШ ФРОНТ ХӖВЕЛАНĂÇӖНЧИ ЦИВИЛИЗАЦИЕ ÇАЛМА КИРЛӖ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 28-мӗш. (ТАСС). Филадельфире йышлă çынлă митинг пулса иртнӗ, вăл Европăн хӗвеланăç пайӗнче халех наступлениллӗ ӗçсем тума тытăнас лозунгпа пулса иртнӗ. Çав митингра Пенсильвани штатӗнчи ӗç федерацийӗн центрӗн председателӗ Макдевитт çапла каланă: «Хăшӗ-пӗри çапла шутлаççӗ: иккӗмӗш фронт тăвасси вăл çарти специалистсен ӗçӗ, теççӗ. Анчах эпӗ çапла калатăп: халăх çав специалистсене эпир иккӗмӗш фронт уçма хатӗр тесе каламалла. Пирӗн халăх иккӗмӗш фронт валли кирлӗ хӗçпăшалсем тăвас тӗлӗшпе кунӗн-çӗрӗн ӗçлет. Эпир пӗлетпӗр: хӗçпăшалсем çителӗклех пур ӗнтӗ», тенӗ. Макдевиттăн çак сăмахӗсене митингри çынсем тăвăллăн алă çупса кӗтсе илнӗ.

Производствăллă профсоюзсен конгресӗ (КПП) Рузвельта телеграмма янă, унта вăл халех Европăна пырса кӗме ыйтса çырнă. Огайо штатӗнчи паллă 65 деятель Рузвельта наступлениллӗ ӗçсем тăвассине васкатма ыйтаççӗ.

Коннектикут штатӗнчи КПП-а кӗрекен профсоюзсен конференцийӗ иккӗмӗш фронта часрах уçма ыйтса резолюци йышăннă. Çавăн пек резолюцие тата Экорсри (Мичиган штачӗ) çар промышленноçӗнчи 2.500 рабочисен митингӗ йышăннă.

АНГЛИРЕ НАСТУПЛЕНИЛЛӖ ӖÇСЕМ ТУМА ПУÇЛАССИШӖН ПЫРАКАН ДВИЖЕНИ

ЛОНДОН, августăн 28-мӗш. (ТАСС). Кăнтăр Уэльсра митингсем нумай пулса иртнӗ. Митингсенче пулнисем гитлерла Германие çӗнтерме кирлӗ мӗнпур мероприятисене пулăшма сăмах панă тата иккӗмӗш фронта халех уçма ыйтнă. Çавăн пек митингсем тата Кардиффра, Табот тата Треорчи порчӗсенче пулса иртнӗ. Сент-Олбенс хулинче (Хартфорд графстви), Грионгра (Шотландия) митинга пухăннă çынсем континентра халех вăрçă ӗçӗсем пуçласа яма ыйтакан резолюцисем йышăннă.

Тата çак организацисем иккӗмӗш фронт уçма ыйтса резолюцисем йышăннă: Лондонри «Стандард Дайамонд тул» предприятири пӗрлешнӗ производствăллă комитет, Стерлинг графствинчи шахтерсен митингӗ, Данири транспорт рабочийӗсем, çавăн пекех тата Шотландири малярсен, машиностроительсен, железнодорожниксен тата джут промышленноçӗнчи рабочисен тред-юнионӗсем йышăннă.

АНГЛИ АВИАЦИЙӖ КАССЕЛЬ ТАТА ГДЫНЯ ХУЛИСЕМ ÇИНЕ ВӖÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННА

ЛОНДОН, августăн 28-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тăрăх, августăн 28-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле Англи бомбардировщикӗсен пысăк соединенийӗсем Кассель çине талккишӗн тата ăнăçлăн вӗçсе пырса тапăннă.

Кассель хули Везер юханшывӗ çинче, Лейпцигпа Кельн хушшинчи çурма-çулăра, вырнаçнă. Унта Германири пӗрремӗш концернсенчен пӗри—Геншелӗн паровозсем тăвакан тӗнчери чи пысăк заводӗсем ӗçлеççӗ. Вӗсене Гитлерăн приказӗ тăрăх самолетсем тума вăрттăн урăхлатса йӗркеленӗ.

Англин авиаци министерстви çапла пӗлтерет: августăн 28-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле Англин бомбардировщикӗсем, Кассельсĕр пуçне, çавăн пекех тата Гдыня порчӗ çине те вӗçсе пырса тапăннă.

ПАРТИЗАНСЕН КӖРЕШӖВӖ КРИТ УТРАВӖ ÇИНЧЕ

КАИР, августăн 27-мӗш. (ТАСС). Нумаях пулмасть нимӗç парашютисчӗсем Крит утравӗн кăнтăр-хӗвелтухăç пайӗнчи сăрт-туллă районсенчен пӗринче десант антармалли вӗренӗве туса иртернӗ. Партизансем çавăн çинчен пӗлнӗ те десантсем анма пултаракан вырăнсенче засадăсем тунă. Нимӗçсем çӗр çине аннă самантра партизансем винтовкăсенчен персе мӗнпур парашютистсенчен çуррине ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Нимӗçсен автомачӗсемпе патронӗсене тытса илсе, партизансем тарса пытаннă.

Тепӗр кунне нимӗçсен командованийӗ тусем хушшине партизансене шырама карательнăй экспедици янă. Анчах карательнăй отряд пӗр ту хушăкӗнче засада тӗлне пырса лекнӗ те ăна партизансем пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тăкнă. Ӗçсем ăнăçсăр пулнипе урса кайнă оккупантсем çывăхри ялсенче темиçе вуншар заложнике пере-пере пăрахнă тата парашютистсене пӗтерсе тăкнă вырăнти яла çунтарса янă.

ИТАЛИ РАБОЧИЙӖСЕНЕ МУССОЛИНИ ГИТЛЕРЛА КАТОРГĂНА ХĂВАЛАТЬ

ЛОНДОН, августăн 28-мӗш. (ТАСС). Италин тулашри суту-илӳ тата валюта министрне Риккардине нумаях пулмасть Германие чӗнсе илнӗ. Çакă паллă пулса тăнă: калаçусем хыççăн Италири хăшпӗр предприятисене, производствăна рационализацилес шутпа, хупмалла тесе, Германи сӗнӳ панипе Риккарди килӗшнӗ. Тӗрӗссипе, çак ӗçе ăна ӗçсӗр юлнă итальянец-рабочисене Германие ӗçлеме ярас шутпа тунă.

Тӗнчери ӗçсене пăхса тухни

(Августăн 22-мӗшӗнчен пуçласа 28-мӗшне çитиччен)

Августăн 22-мӗшӗнче Бразилин столицинче Рио-де-Жанейрора Германипе Италие хирӗç вăрçă пуçласси çинчен Бразили правительствин официальнăй декларацине пичетлесе кăларнă. Гитлеровецсем пӗтӗм тӗнчери правăн мӗнпур законӗсене пăсниве пула, Германипе Италин подводнăй лодкисем нейтральнăй Бразилин суднисем çине пӗр хутчен çеç мар тапăннипе пула, Бразили правительствин хăйӗн хăрушсăрлăхне хӳтӗлемешкӗн алла хӗçпăшал тытма, гитлеризма пӗтерсе тăкас тата пӗтӗм тӗнчери законлăхпа йӗркелӗхе вырăна кӗртес шутпа, хăйӗн вăйӗсене демократиллӗ çӗршывсен вăйӗсемпе пӗрлештерме тивнӗ.

Бразилия—Латинла Америкăри чи пысăк çӗршыв, вăл хăй йышăнакан çӗр лаптăкӗпе (8,5 миллион квадратлă километр) США-ран (Аляскăсăр пуçне) е Китайран (Монголипе Тибетсăр пуçне) пысăкрах çӗршыв пулса тăрать. Бразилире 45 миллион çынна яхăн пурăнать. Бразилия—ялхуçалăхӗпе пурăнакан çӗршыв, вăл хăй аллинче продовольствипе ялхуçалăх чӗртаварӗсен çавтери пысăк ресурсӗсене тытса тăрать. Географи тӗлӗшӗнчен Атлантика океанӗн çыранӗнче, Кивӗ тӗнчене чи çывăхарах вырнаçса тăнине пула, Бразилин стратеги тӗлӗшӗнчен питех те пысăк вырăн йышăнать.

Çапла ӗнтӗ Латинла Америкăри 11 республика (Мексика, Куба, Доминикан республики, Гаити, Панама, Гватемала, Гондурас, Никарагуа тата ыттисем те) Германипе Италие хирӗç вăрçă пуçласа яни çинчен пӗлтернӗ, Латинла Америкăри 8 çӗршыв (уйрăмăн илсен, Венесуэла Боливия, Перу, Уругвай) Германипе тата Италипе экономикăллă, дипломатиллӗ пур çыхăнусене те татнă. Германипе Италие хирӗç вăрçă пуçлас решение Бразили правительстви Латинла Америкăри ытти 12 республикăпа калаçса татăлнă хыççăн йышăннă. Ютçӗршывсенчи пичет пӗр шухăш-кăмăллă пулса çакăн çинчен çирӗплетсе çырать: Европăри гитлерла блока хирӗç Латинла Америкăри ытти мӗнпур çӗршывсем те çывăх вăхăтсенчех вăрçă пуçласси курăнсах тăрать.

Кăнтăр Америкăри промышленность чӗртаварӗсен çавтери пуян ресурсӗсем гитлерла вăрă-хураксене хирӗç мӗнпур прогрессивнăй этемлӗх пӗр хӗрхенӳсӗр туса пыракан вăрçăн пӗтӗмӗшлӗ ӗçне кӗреççӗ. Латинла Америка демократиллӗ блока стратегиллӗ чӗртаварсене, гитлерла коалицие çапса аркатма пулăшаканскерсене, кунран кун ытларах та ытларах парса тăрать. Тепӗр енчен тӗнӗл держависене хурçă пек çирӗппӗн хӗсекен блокада ытларах та ытларах хӗсӗнсе пырать.

* * *

Гитлерла пусмăрçăсен банди, ăна Кăнтăр Российйăра хаяррăнрах та хаяррăнрах отпор панине пăхмасăрах, урса кайсах малалла талпăнать. Халӗ гитлерла режимăн кун-çулне картта çине лартнине вăрă-хураксем питӗ лайăх ăнланаççӗ. Геббельс эрнере пӗрре тухса тăракан «Дас рейх» хаçатра çӗнӗ статья пичетлесе кăларнă. Статьян «Эпир халӗ çӗнтермесен, нихăçан та çӗнтерейместпӗр» текен ячӗ питех те нумая пӗлтерет. Çав статьяна Германири радиостанцисем икӗ хутчен панă та ӗнтӗ. Статьяна мӗнпӗр çырни уççăнах курăнса тăрать. Ăна Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вăрçă фронтӗнче юн юхтарса халран кайса пыракан гитлерла çарсене малалла хăвалас, вӗсен тапăнса пырас вăйне ӳстерес тата юлашки вăйсене пухса та пулин кăнтăралла татах та малалла шăтарса кӗме хăвалас шутпа çырнă.

Çакăнпа пӗрлех гитлерла пропаганда нимӗçсене Российйри иккӗмӗш хӗле кӗме тата ăна тӳссе ирттерме хатӗрлет, вăрçă часах пӗтес суккине ăнлантарса пама тăрăшать. Çакă «хӗллехи пропагандăн çӗнӗ кампанийӗ» çу варринче никам та мар, татах çав Геббельсах пуçласа янă. Ун хыççăн вара, команда панă пекех, çав шухăша нимӗçсемпе итальянецсен хаçачӗсемпе радиостанцийӗсем сарма тытăннă.

Августăн 25-мӗшӗнче Берлинра Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вăрçă фронтӗнчи лару-тăрусене пăхса тухас майпа гитлерла çарăн генерал-лейтенанчӗ Дитмар радио тăрăх пухса каланă. Вăл хăйӗн сăмахӗнче «Ржев патӗнче йывăр та хаяр, халиччен пулман юнлă та вăйлă çапăçусем пуçланса кайрӗç» тесе йышăннă. Анчах Дитмар, паллах, нимӗçсене çав çапăçусем мӗнле аталанса пыни çинчен тӗрӗссине калаca пама хăяйман. Анчах та, паллă сăлтавсене пула, Дитмар «нимешӳллӗн» шарламасăр иртсе кайнă ӗçсем çинчен тӗнче Совет Информаци Бюровӗ ятарласа пӗлтернинчен пӗлчӗ.

Хӗвеланăç тата Калинин фрончӗсенче нимӗç войскисене 40—50 километр каяллла сирсе пăрахни çинчен тата икӗ эрне хушшинче вӗсен, вилнисене кăна шутласан та, 45.000 çын пӗтни çинчен, çавăн пекех тата пирӗн чаçсем тытса илнӗ трофейăсене кăтартса паракан çавтери пысăк цифрăсем çинчен Совет Информаци Бюровӗ пӗлтерни мӗнпур тӗнчене интереслентерсе янă, çакăн çинчен ӗнтӗ ютçӗршывсенчи пур хаçатсем те çыраççӗ.

Ржев тата Гжатскпа Вязьма енӗсенче нимӗçсен оборонине çӗмӗрсе кӗни çинчен Совет Информаци Бюровӗ пӗлтерни гитлерла мерзавецсене вӗлермеллех çапма май пуррине, нимӗçсен фашистла çарӗ хăравçăсемпе паникерсем шутланă пекех вăйлă маррине, Хӗрлӗ Çар тăшмана чарса лартма кăна мар, сирсе пăрахма та пултарнине питех те уçăмлăн кăтартса панчӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ фашистла генерал Дитмар ӳкӗнӳллӗ те салхуллă сасăпа хăйӗн сăмахӗн вӗçӗнче çапла палăртать: «Халăхсен кунçулне виçекен виçе чӳхенме тытăнас сахалтсем те пулма пултарӗç», тет вăл.

Гитлерла войскăсем юлашки икӗ уйăх хушшинче Кăнтăрти Российйăра тунă çитӗнӳсем пирӗн тăван çӗршыв умӗнчи хăрушлăха чылаях ӳстерчӗç.

Хӗрлӗ Çарăн кашни боецӗпе командирӗ çакна лайăх ăнланса илсе çирӗппӗн асра тытмалла: тăшмана халӗ чарса лартсан, унăн войскисене халӗ çапса аркатсан, тăшман вара нихăçан та çавăн чухлӗ вăйсем пухма пултараймасть, нихăçан та çавăн чухлӗ масштабсемпе çӗнӗ наступлени пуçласа яма пултараймасть.

Тăшмана халӗ чарса лартмалла, унăн войскисене кашни кун, кашни сехетре, кашни минутăра пӗтерсе пымалла, гитлерла мерзавецсене пур фронтсенче те вӗлермеллех пыра-пыра çапмалла—çапла ӗнтӗ Хӗрлӗ Çар воинӗсен таса тивӗçӗ. Çапла тума ыйтать халăх, çапла тума ыйтать тăван çӗршыв. Тăван çӗршывăн çакă таса приказне пурнăçа кӗртес тесен, кӗрешӳре çавтери çирӗп те чăтăмлă пулмалла, тăшмана хирӗç пӗлсе, вăя хӗрхенмесӗр çапăçмалла, вара пирӗн тӗрӗс ӗç часах çӗнтерет.

Г. КОНСТАНТИНОВСКИЙ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайӗн — 3—99, ялхуçалăх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 916

Типографи №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.